чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

26/26432/№ Юн кун, 2014, нарăс (февраль), 12 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 17-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн хореографи искусстви енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата пултарулăхра нумай çул вăй хунăшăн Чăваш Республикин "Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ" бюджет учрежденийĕн балет артистне **Наиль Киямтинович МИНГАЗОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ АРТИСЧĔ"** хисеплĕ ят;

сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнче тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин "Васкавлă медицина пулăшăвĕн больници" бюджет учрежденийĕн терапи уйрăмĕн заведующине – врач-терапевтне **Лариса Николаевна ПИВОВАРОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ"** хисеплĕ ят;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă вăй хунăшăн "Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Шăхач ял тăрăхĕн "Культурăна аталантаракан тата халăха библиотека пулăшăвĕпе тивĕçтерекен центрĕ" бюджет учрежденийĕн "Умарина" халăх фольклор ансамблĕн ертӳçине **Зинаида Михайловна ГУГУШКИНĂНА,** Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи Кунер ял тăрăхĕн "Информаципе культура центрĕ" муниципалитетăн бюджет учрежденийĕн Кунер ял библиотекин ертсе пыракан библиотекарьне **Светлана Александровна МАТАНОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "Вăрнарти аш-какай комбиначĕ" тулли мар яваплă обществăн какай касса хатĕрлекенне **Владимир Ильич МАТВЕЕВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

халăха социаллă хӳтлĕх парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин пай пуçлăхне **Надежда Константиновна ЭБЕРТА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН СОЦИАЛЛĂ ХӲТЛĔХĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

*Ыр кăмăллăх*

## Тенкĕ çумне тенкĕ

Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 31-мĕшĕнче пирĕн республикăра "Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн" марафон вун саккăрмĕш хут вăй илчĕ. Унăн тĕллевĕ чăннипех пархатарлă – сахал тупăшлă çемьесенче çитĕнекен пултаруллă çамрăксене пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшмашкăн, сусăр ачасене, тăлăхсене тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисене сиплемешкĕн укçа пухасси.

Марафон ачалăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе общественноçа тимлĕрех пулма ыйтать, граждансен, ĕç коллективĕсен, общество организацийĕсен вăйне пĕрлештерет. Кун пек чухне сăваплă акци пухмачне кам миçе тенкĕлĕх пуянлатни пĕлтерĕшлех те мар, кашни çын хывнă пĕчĕк взнос ырă ĕç тума май пани пахарах.

Çĕмĕрле районĕнчи Макарин ял тăрăхĕн администрацийĕн ĕçченĕсем марафона çуллен пуçаруллă хутшăнаççĕ, хăйсен ырăлăхĕн, чун ăшшин, телейĕн пĕр пайне социаллă тата медицина пулăшăвĕ кирлĕ ачасене парнелеççĕ – пĕр кунхи шалăва унăн счечĕ çине куçараççĕ. Кăçал та çаплах турĕç.

Елчĕк тăрăхĕнче пурăнакансем те "Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн" ыр кăмăллăх акцийĕн счетне пуянлатассине хăйсен тивĕçĕ тесе шухăшлаççĕ. Тенкĕ çумне тенкĕ хушса пуçтарнă укçапа иртнĕ çул, сăмахран, районти ача-пăча валли вăйă оборудованийĕ туяннă, сахал тупăшлă çемьесенче çитĕнекенсене ятран пулăшнă. Ыр кăмăллăх акцийĕн пĕрремĕш эрнинче республикăри предприятисем-организаци тата уйрăм çынсем 72150 тенкĕ куçарнă. Çав шутра: Патăрьелсем – 1500, Красноармейскисем – 10000, Хĕрлĕ Чутайсем – 1650, Елчĕксем – 8000, Шупашкарсем – 51000 тенкĕ.

"Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн" акцие кашниех хăйĕн тӳпине хывма пултарать, çак тĕллевпе "Раççей ача-пăча фончĕн" регион уйрăмне /Шупашкар хули, Петров урамĕ, 7-мĕш çурт/ пымалла е /8352/ 62-89-42 телефонпа шăнкăравламалла.

Марафона хывакан укçана общество организацийĕн счечĕ çине куçарма юрать. Кăçал унăн пухмачне СМС ярса пуянлатма пулать. Ырă тума васкăр. Пирĕн тивĕç – хӳтлĕхсĕр ачасен шăпине çăмăллатма пулăшасси, вĕсене хамăрăн тимлĕхе туйса илмешкĕн май туса парасси. Ют ачасем çук, вĕсем пурте пирĕн.

Хаклă вулаканăмăрсем, эсир те сăваплă юхăма пуçаруллă хутшăнасса шанса "Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонĕн реквизичĕсене аса илтеретпĕр:

ЧРО ООБФ "Российский детский фонд"

ИНН 2128005408/КПП 213001001

Р/с 40703810075220160067 в Чувашском ОСБ № 8613 г.Чебоксары

БИК 049706609, кор/с 30101810300000000609

■ **Валентина СМИРНОВА**

*Пĕтĕмлетӳ*

# Кам унта? Суд приставĕ!




***Пĕлтĕр приставсем суд йышăнăвĕсене пурнăçламалли производствăсем тăрăх пĕтĕмпе 4 млрд тенкĕ ытла шыраса илнĕ. Çав шутра 1,7 млрд тенке яхăн – налуксем, бюджета хывмалли ытти тӳлев. Çак тата ытти кăтартăва журналистсене пухса иртнĕ çулхи ĕçе пĕтĕмлетнĕ май Федерацин суд приставĕсен службин республикăри управленийĕн ертӳçи Анатолий ИВАНОВ пĕлтерчĕ.***

### «Укçа пирĕн кĕсьене кĕмест»

Чăваш Енĕн тĕп суд приставĕ каланă тăрăх – управлени тытăмĕнчи подразделенисенче 2013 çулта 836 пин производство пулнă. Çакă виçĕм çулхинчен 45 пин чухлĕ сахалрах. Апла пулин те кашни пристав пуçне тивнĕ производствăсен шучĕ çав-çавах пысăк – 2,7 пине яхăн. Вăтамран пĕр пристав куллен 5 производствăна вĕçлет. Ку кăтартупа пирĕн приставсем Раççейре 6-мĕш вырăнта-мĕн.

Журналистсем çапларах халăх вĕт – чăкăлтăш ыйтусем пама юратаççĕ. Ку хутĕнче те унашкаллисĕр пулмарĕ. Сăмахран, халăхра приставсем шыраса илекен парăмсен пĕр пайне хăйсене илни пирки. Анатолий Юрьевич татăклăн хирĕçлерĕ: ĕлĕкрех, чăнах та, «исполнительский сбор» текен тӳлевĕн пĕр пайĕпе приставсене хавхалантарма усă курнă, анчах халĕ пĕтĕм тӳлев хыснана кĕрет.

Сăмах май, асăннă «сбор» виçи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пысăкланнă: уйрăм çынсемшĕн вăл унччен 500 тенкĕччĕ, халь – 1 пин тенкĕ. Организацисемшĕн – 10 пин. Çакăн витĕмĕ куç кĕрет: юлашки çулсенче пуçласа юлнă производствăсен шутне чакарма пултарнине тĕп пристав шăпах асăннă виçене пысăклатса пынипе сăлтавлать. Тĕслĕхрен, ПАИ штрафĕсен шучĕ ӳссе пырать, çав вăхăтрах приставсем патне иртнĕ çул вĕсене шыраса илме ярса панă ĕçсем 44 пин чухлĕ сахалланнă. Эппин, çынсем штрафсене вăхăтра тӳлемеллине ăнланса пыраççĕ. Çын тӳлеве хăйĕн ирĕкĕпе татмалли вăхăта та тăснă: унччен 30 кунччĕ, халĕ – 60. Анатолий Юрьевич тепĕр саманта та асăнчĕ: халĕ штрафа кĕске вăхăтра тӳлесен унăн виçине пĕчĕклетмелли мерăна сӳтсе яваççĕ. Сăмахран, çул-йĕр инспекторĕ правилăсене пăснă водителе 1 пин тенкĕлĕх штрафларĕ тейĕпĕр. Айăпа кĕни штрафа çийĕнчех, темиçе кун хушшинче, тӳлерĕ тĕк – 1 пин мар, асăннă виçерен чылай пĕчĕкрех укçа хывать. Чăннипех вырăнлă йышăну пулмалла пек...

### Пĕлмени тӳлеврен хăтармасть

Штраф, суд йышăнăвне пурнăçламалли производство пуçарни çинчен пĕлмени – тӳрре тухмалли сăлтав мар, ку тӳлеврен хăтармасть. А.Иванов иккĕленмест: çынсен халĕ штраф пирки пĕлмелли майсем анлă. Пĕрремĕшĕнчен, приставсем çыру яраççĕ. Паллах, çын регистрациленнĕ вырăнта пурăнманни те часчасах пулать – çавăнпа хайхи çырăва илеймест. Анчах ăна ФСПС сайтне уйăхра пĕрре те пулин кĕрсе пăхма никам та чăрмантармасть, унта суд йышăнăвĕсене пурнăçламалли производствăсем пирки пĕтĕм кăтарту пур.

Приставсем парăм шучĕпе арестлекен пурлăха чăн хакран йӳнĕрех сутаççĕ тени пирки те калаçу пулчĕ. Анатолий Юрьевич палăртнă тăрăх – пĕлтĕр приставсем 15 яхăн хваттере сутнă. 250 яхăн автомобиле сутлăха кăларнă, вĕсенчен 74-шĕ кăна сутăннă. Транспорт хатĕрĕсен пысăк пайĕ сутăнманни хăех çирĕплетет: эппин, вĕсене хăйсен хакĕнчен йӳнĕрехпе сутлăха кăларман – шăпах хаклă пулнипе никам та туянман. Тепĕр тесен парăм шучĕпе йĕркеллĕ автомобиле арестлесен ĕç-пуç ытларах чухне ăна сутса ярасси патне çитеймест – «кустăрмаллă урхамахсăр» юлас хăрушлăх тухса тăрсанах унăн хуçин укçа тупăнать, парăмпа татăлать. Çавăнпах пĕлтерĕшлĕ пурлăха арестлеме тăрăшаççĕ. Унччен микроволновкăна, çавăн йышши ытти вак-тĕвеке туртса илме пултарнă – кунашкалли нумайăшне хăратмасть, çийĕнчен усă курнă çавнашкал техникăна йĕркеллĕ хакпа сутма та йывăр.

● ➡ 2 стр.

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Çыхăну çирĕпленет

***К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче В.И.Качалов ячĕллĕ Хусан академи вырăс драма театрĕн гастролĕ иртнĕ.***

Нарăсăн 8-мĕшĕнче икĕ пайлă "Глумов" спектакль кăтартнă. Вырсарни кун сцена çине "Квадратура круга" водевиль тухнă, тунти кун – "Пиковая дама" фантази. Виççĕшне те Раççей тата Тутарстан халăх артисчĕ, Раççей правительствин Ф.Волков ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ Александр Славутский режиссер лартнă.

"Пиковая дама" ĕçе ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов тата ЧР Театр ĕçченĕсен союзĕн председателĕ Геннадий Медведев пырса курнă. Вадим Петрович хăнасене икĕ республика хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме, Шупашкар çыннисене хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарма май тупнăшăн тав тунă, Александр Славутские министерствăн Тав хучĕпе чысланă.

**Н.СМИРНОВА.**

### "Шевлесем" – пĕрремĕш

***Чăваш Ен спортсменĕсем командăсен хушшинче кросс енĕпе иртнĕ Европа кубокĕнчен çĕнтерӳпе таврăннă. Ку хутĕнче ăмăртăва Португалири Альбуфейра хули йышăннă.***



Европа турнирне Мускаври "Шевле" спорт клубĕнчи хĕрарăмсемпе юниорсен командисем хутшăннă. Вĕсен йышĕнче Чăваш Ен атлечĕсем те пулнă. Пирĕн ентешсене 3 километр та 825 метрлă дистанцире уйрăмах ăнăçнă. Ку стартра Ольга Николаевăпа Тамара Чалкова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă, Ксения Махнева – вуннăмĕш. Хĕрарăмсен ушкăнĕнче Наталья Горчакова виççĕмĕш кăтартупа палăрнă. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе Раççей спортсменĕсем Италипе Испани командисене кая хăварса пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарнă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Вĕсем сывă пурнăçшăн

***Чăваш Ене "Ман хыççăн чуп" федераци проекчĕн ертӳçи, РФ çамрăксен политикин канашĕн членĕ Наталья Шульга тата RRUNS спорт клубĕн соучредителĕ Артем Долгополов килсе кайнă.***

Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем ĕçлĕ тĕл пулăва мĕнрен пуçланă тетĕр? Паллах, чупуран. Кӳлмек хĕррине Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн студенчĕсемпе преподавателĕсем те тухнă. Ирхи зарядкăра хăпартланнăскерсем пирĕн республикăра "Ман хыççăн чуп" проектăн штабне уçнине халалланă уява хутшăннă тата проект хастарĕсемпе курса калаçнă. Унтан хăнасем колледжра сывă апатлану темипе ăсталăх сехечĕ ирттернĕ, çавăн пекех студентсене кулленхи тренировка, массаж хăйне евĕрлĕхĕсемпе паллаштарнă.

Чăваш Енре "Ман хыççăн чуп" проект 2013 çултанпа пурнăçланать, хальлĕхе йышра – 500 ытла волонтер. Шупашкарта, Çĕмĕрлере, Етĕрнере, Тăвайра уйрăм штабсем ĕçлеççĕ. Вĕсем çынсене спортпа туслаштарас тĕллевпе кашни эрнере чупусемпе ятарлă акцисем йĕркелеççĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Пушарта çынсем вилнĕ

***Нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче Элĕк тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи икĕ пушарта тăватă çын пурнăçĕ татăлнă. Çак фактсем тĕлĕшĕпе следстви тĕрĕслевĕ ирттереççĕ.***

Элĕк районĕнчи пураса тунă пĕр хутлă çуртра "хĕрлĕ автан" ташлама тытăнни пирки кӳршисем шăнкăравласа пĕлтернĕ. Вут-çулăма сӳнтерсен инкек вырăнĕнче икĕ виле тупнă: пӳртĕн 76-ри хуçин тата çак хĕрарăма хуçалăхра пулăшнă 47-ри арçыннăн (вăл та ку ялтах пурăннă) кĕлеткисене. Çурт тĕппипех çунса кайнă. Синкер сăлтавне тĕпчеççĕ, версисенчен пĕри – пирус туртнă чухне вутпа асăрханусăр пулни.

Çав кунах каçхи 9 сехет иртсен Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пĕр ялти çурт та кĕл-кăмрăка çаврăннă. Ку пушарта та икĕ çын вилнĕ: кил хуçин 55 çулти арăмĕ тата унăн 34-ри тăванĕ. Ял çыннисем каланă тăрăх – вĕсем кăшт маларах çак арçынпа хĕрарăм ӳсĕр пулнине асăрханă. Малтанласа палăртнă тăрăх – инкек сăлтавĕ хутнă кăмакана пăхса тăманни.

Хальхи вăхăтра суд-медицина тата пушар-техника экспертизисем ирттереççĕ.

**И.БЕЛОВА.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

## ЫЛТĂН-КĔМĔЛĔ МАР, СУМĔ ХАКЛĂ

**Вулаканăм тавçăрчĕ пулĕ – паян калас сăмахăм шкул ачисене вĕренӳре питĕ лайăх ĕлкĕрсе пынăшăн панă медаль тавра çаврăнĕ. Вăтам шкулсенче 70 çул каярах усă курма тытăннă хавхалантару мелĕ малашне хăйĕн вăйне çухатĕ. Сăлтавĕ паллă: 2013 çулхи кĕркунне Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви "Вĕренӳри çитĕнӳсемшĕн" медальсене малашне пăрахăçласси çинчен хушу кăларчĕ. "Ылтăн" е "кĕмĕл" вырăнне пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илни çинчен ыттисенчен уйрăлса тăракан аттестат памашкăн йышăннă. Çак çĕнĕлĕхе васкасах уççăн пĕлтерменрен хăшĕ-пĕри халĕ те иккĕленет: йăлана çирĕп кĕнĕ награда кăçалхи чи лайăх выпускниксене тивĕçĕ-и?**

**Ăна памашкăн пăрахас шухăш мĕнпе çыхăннă-ха? Ахăртнех, федерацин "Вĕренӳ çинчен" саккунĕ, иртнĕ авăн уйăхĕнче вăя кĕнĕскер, илсе пынă ун патне. Пĕлетпĕр: юлашки пилĕк çулта аслă шкула вĕренме кĕмешкĕн медаль нимĕнле çăмăллăх та паман. Абитуриентсене ППЭ кăтартăвĕсемпе олимпиадăра /федераци тапхăрĕнче/ çĕнтернине кура çеç суйланă. Медаль ĕнерхи шкул ачине нимĕн тума та кирлĕ марри пирки пĕтĕмлетӳ çапла хăйне хăех тухса тăнă. Пирĕн çĕр-шывра перекетлĕх хăйĕн вырăнне пачах çухатман апла...**

**Медаль-орденпа, пĕтĕмĕшле калас-тăк, çынна мĕншĕн чыслаççĕ-ха? Вăл маттурлăхĕпе, паттăрлăхĕпе е хăюлăхĕпе ыттисенчен уйрăлса тăнăран палăртас, общество умĕнче хавхалантарас тесе. "Пурте тивĕçлипе илмеççĕ-çке ăна", – тавлашăва кĕме хатĕр пуль чылайăшĕ. Килĕшетĕп вĕсемпе те. Анчах ку шкул тĕнчине кăна пырса тивет-и? Университетра пĕр вăхăтра вĕреннĕ пĕлĕшĕм хĕрлĕ диплом илес тесе 4 экзамена çĕнĕрен тытрĕ, анчах хайхи "чи маттурри" хăйĕн специальноçĕпе ку таранччен пĕр кун та ĕçлемен. Чылай чухне халăхăн йăла çапларах: кирек мĕнле пулăмăн ырă енне куриччен начаррине куратпăр. Кашни ялпаларан унăн материал усăлăхне курма ăнтăлатпăр. Анчах пурнăçра чылай пĕлтерĕшлĕрех хаклăхсем пуррине мĕншĕн манмалла?**

**...Ун чухне виççĕмĕш класра вĕренеттĕмĕр. Хамăрăн шкултах – Комсомольски районĕнчи Аслă Чурачăкра – аслă классене математика вĕрентекен Августина Можаевăпа тĕл пулу иртнĕччĕ. Вăл, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçиччен çут тĕнчене килнĕскер, ачалăхĕ çинчен каласа кăтарнисем халĕ те асрах. Учитель ыйтнипе вăл хăйĕн кĕмĕл медальне, шкулта лайăх вĕреннĕшĕн тивĕçнĕскерне, илсе пынăччĕ. Шкулпа сыв пуллашичченех Августина Яковлевна маншăн кĕçĕн классенче куç умне тухнă сăнарлă юлчĕ: питĕ ăслă, тарăн пĕлӳ пама пултаракан, анлă тавра курăмлă, кирек кама та пулăшма хатĕр аслă юлташ. Тăххăрти хĕр пĕрчишĕн вĕрентекенĕн кĕмĕлĕ укça çине куçарсан /ун чухне медальсем тĕрлĕ металл хутăшĕнчен мар, хăйсен ятне тивĕçлĕ хаклă йышши металранах пулнине халĕ пĕлетпĕр/ мĕн хака ларни мар, хуçи ăна пула мĕнле çăмăллăха тивĕçни те мар, медаль кӳрекен ят-сум кăна пĕлтерĕшлĕ пулнă. Пурнăçăн анлă çулĕ çине тухакан çамрăка медальпе наградăланин тĕшшине эпĕ нимрен ытла çакăнта куратăп.**

**Медалистсем вĕренӳ кирек хăш заведенине экзаменсăр, тест витĕр тухнипех кĕме пултарнă çулсенче мĕнлерехчĕ-ха ӳкерчĕк? Факультетсен рейтингĕнче чи çӳлти пусма çинче тăраканнисене ушкăнĕпех медалистсем йышăннине пурте ас тăватпăр. Çавнашкал йĕрке хута кайнă çул пичче вăтам шкул пĕтерчĕ. Пединститута математика специальноçĕпе вĕренме кĕрес ĕмĕтлĕччĕ. Аттестатĕнче пĕртен пĕр "4" пулин те – медальсĕр. Кăнтăрлахи уйрăмри 90 вырăна 100 процентчĕпе наградăллисем йышăнчĕç те çывăх тăванăм ирĕксĕрех "Физикăпа информатикăна" суйларĕ.**

**Хăнăхнă пулăма пурнăçран тӳрех кăкласа пăрахма хĕн. Çавăнпах Интернетри комментарисенче медале шкул шайĕнче те пулин сыхласа хăварасси çинчен çыракан йышлă. Тăван пĕлӳ çурчĕн ĕренкипе илемлетесшĕн ăна хăшĕ-пĕри. Шухăша сывлăшрах "çăварлăхлакансем" те пур: кăмăла каякан медале туххăмрах пахалăхлăн калăпласа пама хатĕррине пĕлтереççĕ. Хакне çийĕнчех палăртакансем те тупăнкалаççĕ. Темле пулсан та – шкул медалĕн пач урăх историйĕ пулĕ вăл.**

**Сăмахăма вĕçлемелле пек, анчах... Çак кунсенче Мускаври пĕр шкулта чи лайăх вĕренекен шутланнă, аттестатпа пĕрлех медаль илме ĕмĕтленнĕ çул çитмен каччăн хăтланăвĕ пуçран тухмасть. Лартма та ĕлкĕреймен "тăваттăшăн" çапла ăс-тăнран тухса кайнине каçарма май çук-тăр. Каллех ĕмĕрхи ыйтăвăн – воспитанин – çул юппинче тăрать паян общество. Лайăх енпе начарри каллех чăлханса каяççĕ. "Медаль" сăмаха çак тĕслĕхпе пачах варалас килмест те... Шел, унăн та тӳнтер енĕ пуррине ку хутĕнче тӳрремĕнех ăнланса ĕненме тивет.**

■ **Ирина ПУШКИНА**

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çăвать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 8, каçхине 3 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 755 мм, сывлăшри нӳрĕк 88 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 23 минут.**

Ыран улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла та, каçхине те 0 градус.** Атмосфера пусăмĕ 755 мм, сывлăшри нӳрĕк 90 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 28 минут.**



# ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

*Конференци*

## Аталантарма, ӳстерме, хутшăнма пулăшĕ

***Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Халăх хуçалăхĕпе патшалăх службин академийĕн /ХХПСА/ Шупашкарти филиалĕнче «Раççейĕн глобализаци тапхăрĕнчи тикĕс аталанăвĕн малашлăхĕпе çивĕч ыйтăвĕсем» ăслăлăх-практика конференцийĕ иртнĕ. Унăн ĕçне Мускаври стратеги пуçарăвĕсен агентствин ятарлă проектсен департаменчĕн ертӳçи И.Дементьев, аслă шкулсен преподавателĕсем, ăсчахсемпе аспирантсем, патшалăх влаçĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертӳçисем, Мускав, Чул хула, Хусан, Вологда, Магнитогорск, Челябинск, Йошкар-Ола, Шупашкар тата ытти хула-облаçри общество ĕçченĕсем, Германи, Швеци, Украина, Беларуç ăсчахĕсем хутшăннă.***

ХХПСАн Шупашкарти филиалĕн директорĕ, юридици ăслăлăхĕсен кандидачĕ Михаил Кузьмин доцент чăваш çĕрĕ çинче уçăлнă конференцие хутшăнакансене саламланă май Чăваш Республики те çак пулăмран аякра пăрăнса юлма пултарайманнине, хамăр çĕр-шыври теоретиксемпе практиксене тата чикĕ тулашĕнчи ĕçтешсене хутшăнтарса ирттерекен конференцин пĕлтерĕшĕ пысăккине палăртрĕ. «Пирĕн филиалăн ăслăлăх хăвачĕ пĕчĕк мар. Эпир çӳллĕ шайра ăслăлăх экспертизисем хатĕрлеме, тĕпчев ĕçĕсем ирттерме, тĕрлĕ мероприяти, çав шутра – «çавра сĕтел», конференци т.ыт.те йĕркелеме пултаратпăр, – терĕ Михаил Александрович. – Çакă пĕтĕмĕшле тĕп программăсемпе вĕренекен студентсене влаç органĕсенче, общество организацийĕсенче тата ытти тытăмра практика иртнĕ чухне малашнехи ĕçре кирлĕ енсене аталантарма, ертӳçĕ ăсталăхне ӳстерме, çынсемпе хутшăнма пулăшĕ...»

ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ, экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ Светлана Енилина улшăнуллă тĕнчен улшăнми чăнлăхĕ çинче чарăнса тăчĕ: «Кирек мĕнле çĕр-шыв малашлăхĕ унăн тикĕс аталанăвĕпе тачă çыхăннă...» Светлана Александровна палăртнă тăрăх – республика бюджечĕн пĕрлехи тупăш пайĕ тулса пырасси патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе мĕнле усă курнинчен нумай килет. Çак тĕллевпе рынок инструменчĕсемпе туллин тата пĕлсе усă курмалла. Акă, тĕслĕхрен, çĕре аукционра сутнипе е ăна палăртнă вăхăта тара панипе кăна пĕлтĕр республика бюджетне 260 млн тенкĕ хывнă. Вăл пĕтĕмпех социаллă объектсем – ача сачĕсем, пурăнмалли çурт-йĕр – çĕклеме тата вĕренĕве модернизацилеме кайнă.

Конференцие хутшăнакансене ЧР юстици министрĕ, юридици ăслăлăхĕсен кандидачĕ Надежда Прокопьева та саламларĕ. Надежда Викторовна конференци теми Раççей Федерацийĕн истори аталанăвĕн хальхи тапхăрĕпе тачă çыхăннине палăртрĕ: «Секцисенче сӳтсе явма сĕннĕ темăсем те хамăр патшалăхăмăр кун-çулĕшĕн çав тери çивĕч. Демократи институчĕсемпе граждансен обществишĕн, вĕсен аталанăвĕшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Юлашки икĕ вунă çуллăхра пирĕн çĕр-шывра демократи принципĕсен аталанăвĕн ыйтăвĕсем яланах тĕпре». Чăваш Енре Общество палати йĕркеленнĕ, Ача, Этем тата Предпринимательсен прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйсен общество институчĕсем ĕçлеççĕ. Республикăри ĕç тăвакан влаç органĕсенче влаçпа халăха, общество организацийĕсемпе çыхăнтаракан, вĕсен ыйтăвĕсене татса пама пулăшакан, прависене хӳтĕлекен ятарлă канашсем пуçарулăх кăтартаççĕ. Вĕсем патшалăх влаç органĕсене халăх ыйтăвĕсене татса пама пулăшнине палăртрĕç.



Конференцире ЧР муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев та хăйĕн шухăшне палăртрĕ: «Чылай чухне пире тарăн пĕлӳллĕ, теорие алла çирĕп илнĕ, халăхпа хутшăнма пĕлекен, вĕсен ыйтăвĕсене тĕрĕс ăнланса татса пама пултаракан специалистсем çитмеççĕ. ХХПСА ку енĕпе пысăк ĕç тăвать, экономика секторĕ, патшалăх управленийĕ тата ытти тытăм валли кадрсем хатĕрлет. Кĕçех эпир патшалăх секторне маттур, пуçаруллă, ăста специалистсем килнине туйса илĕпĕр. Кунта ырă улшăнусем пулнине халех куратпăр».

Конференцин пленарлă ларăвĕнче ХХПСАн Шупашкарти филиалĕ ЧР Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен, ЧР Юстици министерствисемпе тата ЧР муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕпе, ЧР пĕчĕк бизнеса пулăшакан агентствăпа пысăк квалификациллĕ çамрăк кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе килĕштерсе ĕçлес пирки тунă килĕшӳсене алă пусрĕç.

Конференцире пилĕк секци ĕçлерĕ. Унăн ĕçне хутшăнакансем видеоçыхăну мелĕпе Швецири Сĕдертелье хулин муниципалитет вĕренĕвĕн управленийĕн пай пуçлăхĕпе Йота Сандинпа тата çак управленин специалисчĕпе, иммигрантсене вырăс чĕлхи вĕрентекенпе, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕпе Татьяна Зотовăпа çыхăнса калаçрĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Ял пурнăçĕ*

## Тĕллевсене халăхпа пурнăçлатпăр

***Çапла палăртрĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кив Атикасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Юрий Чертов вырăнти влаçăн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнĕ май. Ку тăрăхра ӳркенмен çемье чылай. Çакна пуçлăх калаçăвĕнчен пĕлтĕм.***



● *Ю.Чертов.*

Ял тăрăхĕ 8 яла пĕрлештерет, 1380 çын пурăнать. Демографи лару-тăрăвĕ çăмăлах мар, çуралакансен йышĕ вилекенсенчен сахал. 2013 çулта 7 ача çуралнă, 30 çын вилнĕ.

Вырăнти влаç ялсен хăтлăхĕшĕн, тирпей-илемĕшĕн сахал мар тăрăшать. Иртнĕ çул, сăмахран, территорири çăвасене тирпейлессипе тĕллевлĕ ĕçленĕ. Кунта вĕсем – 3. Çу кунĕсенче çăвасене тирпей-илем кӳрессине халăха та явăçтараççĕ. Сăваплă вырăн яланах таса пултăр теççĕ ку тăрăхра пурăнакансем.

Кашни ялах автоçулпа çыхăнтарнă. Анчах пуçлăх ялсен хушшинчи çул çинчен те шухăшлать. Сăмахран, Кив Атикасси ялĕнчи Вăрман урамĕнчи çулпа йĕпе-сапара транспортпа кăна мар, çуран утса тухма та хĕн. Юрий Ивановичăн тĕллевĕ – ял хушшипе хытарнă çул тăвасси. Анчах бюджетра укçа-тенкĕ сахалли çак ыйтăва хăвăрт татса пама чăрмантарать. Пуçлăх кăткăс ыйтăвăн тупсăмне татса памалли çул-йĕре тупасси шанчăклă.

Хĕл кунĕсенче автоçулсене юртан тасатассипе Кив Атикассисем лайăх ĕçлеççĕ. Борис Борисов хăйĕн тракторĕпе çула уçать. Çакă ĕне усракансемшĕн уйрăмах меллĕ. Вĕсем ирсерен сĕт леçме тухаççĕ. Кив Атикасси тăрăхĕнче пурăнакансем ку енĕпе чăннипех те çавранăçуллă. Кăçал сĕт хакĕ самаях ӳснĕрен уйрăм хуçалăхсенче 4-5 ĕне усраççĕ. Сĕт укçипе çемье бюджетне çирĕплетеççĕ.

«Ӳркенменнисем хушма хуçалăха тĕллевлĕ аталантарсах тулăх пурăнаççĕ», – терĕ Юрий Иванович. Кив Атикасси ял тăрăхĕнче мăйракаллă шултра выльăх 943 пуç, вăл шутра сăвакан ĕне – 488.

Патшалăх паракан çăмăллăхлă кредитпа çынсем вите-хуралтă тăваççĕ, ĕне-выльăх туянаççĕ. Кив Атикасси ялĕнчи Галина Данилова 5 ĕне усрать, Вырăсушкăнь ялĕнчи Вячеслав Леонтьев çемйи 5 ĕне, 40 ытла сурăх, хур-кăвакал, чăх тытать. 3-4 ĕне усракан çемье пайтах. Вĕсен тĕслĕхĕ ыттисене те хавхалантарать.

Татса паман ыйтусен шутĕнче – çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарасси. Хальлĕхе 35 процентĕ çеç харпăрлăхра. Ыттисен шăпине хальтерех татса памалла. Ялти ватăсем çĕр пайĕнчен хăтарма ыйтса çыраççĕ. Сăлтавĕ паллă – çĕр çинче ĕçлеме техника, çирĕп вăй-хăват кирлĕ. Çĕрпе пĕлсе усă курмасан вăл хуçине те тăрантараймĕ. Кăçал ку енĕпе Кив Атикассисем тĕллевлĕ ĕçлеме палăртнă.

Юлашки вăхăтра вырăнти влаçăн полномочийĕсем палăрмаллах ӳсрĕç. Çавна май ĕç калăпăшĕ те пĕчĕкех мар. Умри тĕллевсене пурнăçлама халăхпа ĕçлени витĕм кӳрет Юрий Чертов пуçлăха.

■ **Юлия МАРЕЕВА**

*Çивĕч ыйту*

## Сĕт те «калаçтарать»

***Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ кашни эрне вĕçĕнчех халăхран сĕт туянакан юридици сăпачĕллĕ предприятисемпе уйрăм предпринимательсем çак продукцие мĕн хакпа илнин кăтартăвĕсене пуçтарма тытăнчĕ. Çапла туни питĕ тĕрĕс. Çынсен ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех пулса пынине вăхăтра пĕлсе тăмалла.***

Халĕ Йĕпреç тăрăхĕнче сĕт пухакансен йышĕ хăвăрт ӳсме тытăнчĕ. Пĕр енчен çакна лайăх пулăм тейĕпĕр. Мĕншĕн тесен сутлăх сĕте ыйтакан нумайланни продукцие тирпейлекен предприятисене васкавлăрах ăсатма май туса парать, вĕсен пĕр-пĕрин хушшинчи тупăшаслăх витĕмĕпе çивĕчлĕхне ӳстерме пулăшать. Пайтаçăсен хăйсен те ĕçтешĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен вăхăтра пĕлсе тăни кирлех.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Алина Иванова, сĕт пуçтаракансен ĕçне-хĕлне шута илсе пыраканскер, çапла каласа парать: «Килти хушма хуçалăхра ĕне тытакансем сĕт мĕн тери тупăшлă пулнине уçăмлăнах туйса илчĕç. Кăтартусене пухма тытăнсан эпĕ кашни хутĕнчех ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе çыхăнатăп. Вĕсем ку ыйтăва кун йĕркинче тытма тăрăшни савăнтарать. Каланине çирĕплетсе темиçе цифра илсе кăтартам. 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне районти уйрăм хуçалăхсенче пĕтĕмпе 3785 ĕне тытнă. Ара, ял хуçалăх предприятийĕсенче кунтан икĕ хут сахалтарах усраççĕ-çке! Ĕнеллĕ картишсем Хурамал, Ирçе Çармăс, Чăваш Тимеш ял тăрăхĕсенчи ялсенче уйрăмах йышлă. Асăннă ял тăрăхĕсен администрацийĕсем, чăнах та, килти хушма хуçалăхсене малалла аталантарас ĕçре тăрăшуллă та, пуçаруллă та. Вĕсен тĕслĕхне ыттисем патне çитерес тĕллевпе район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пуçлăхĕсене хутшăнтарса канашлу та ирттерчĕ ку ыйтупа...»

Çапла декларĕ те тĕп эксперт специалист сĕтел сунтăхĕнчен кăларнă хутсемпе паллашма сĕнчĕ. «Хăй вăхăтĕнче Йĕпреç поселокĕнче – район центрĕнче – пурăнакансем кил-хуçалăхра 1000 ĕнене яхăнах тытнă, – терĕ вăл. – Кунта статистикăн районти уйрăмĕ 20 çул каялла пĕтĕмлетнĕ кăтартусем. Йĕпреçре кăна çуллахи кунсенче 10 кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ вăрман уçланкисенче. Паян ку аса илӳре кăна юлнă. 9 пин ытла çынлă райцентрта миçен ĕне усраççĕ тетĕр? 68-ăн кăна! Буинскпа Березовка поселокĕсенче те çавнашкал лару-тăрăвах. Хальхи çынсем выльăх-чĕрлĕхпе аппаланасшăн мар...»

Ĕне усракан çынсен вара хăйсен хуйхи-суйхи. Татса памалли çивĕч ыйтусем те пур вĕсен. Алина Ивановна çавна та çĕклерĕ калаçу вăхăтĕнче. Халăхран сĕт пуçтаракан уйрăм çынсемпе пĕрлех ку ĕçе Йĕпреç тăрăхĕнче «Сĕт империйĕ», «Молочник», «Молочный двор – Канаш», «Нур» ООО туса пыраççĕ. Вăрнарти типĕтнĕ сĕт завочĕ те Йĕпреçсен продукцине йышăнать. Районти сутлăх сĕтĕн вăтам хакĕ хальлĕхе 19 тенкĕрен пуçласа 19 тенкĕ те 50 пуспа танлашать. Çав хушăрах Вăрнарти сĕт завочĕ Пысăк Упакасси, Киров ял тăрăхĕсенчи граждансенчен 20 тенкĕрен кая мар хакпа сутăн илет. Мĕншĕн хак пĕрешкел мар? Çак ыйту ĕне усракансене канăç памасть паян. Уйрăм сутуçăсем мар, юридици сăпатĕнче шутланакан предприятисем туянакан сĕтшĕн чи пĕчĕк виçепе тӳлени куç кĕрет. Паллах, кун сăлтавне пĕр енлĕн татса пама çук. Алина Иванова каланă тăрăх – паянхи куна уйрăм хушма хуçалăхсенчен илекен сĕт пахалăхĕшĕн ытлашши чĕрре кĕмеççĕ-ха. Ӳлĕмрен çав ыйту тĕпре пулмаллах. Санитарипе гигиена йĕркисене çирĕп пăхăнмасăр, ĕç производствин культурине тĕпе хумасăр пахалăхлă продукци туса илесси пирки ĕмĕтленни кăлăхах. Пĕтĕмлетӳллĕ шухăш пуриншĕн те паллă: «Сĕт пахалăхлă – хакĕ те пысăк!»

Пĕлтĕрхи кĕр кунĕсенче Пучинкере сĕте тирпейлекен тата унран тĕрлĕ продукци кăларакан завод ĕçе кĕчĕ. Вăл асăннă сала çывăхĕнчи ялсенче пурăнакансенчен сĕт туянать. Пучинкери «Красный партизан» колхоз хăй те кашни кунах унта паха продукци ăсатать. Асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Федоров каланă тăрăх – уйрăм кил-хуçалăхра ĕне тытакансем те вырăнтах çакăн пек предприяти уçăлнăшăн кăмăллă. «Ял администрацийĕн ларăвĕсенче те, депутатсен Пухăвĕнче те граждансем сутакан сĕт хакĕ мĕн чухлĕ пулнипе кăсăклансах тăратпăр, ăна ытти çĕрти хаксемпе танлаштарса пăхатпăр», – терĕ Николай Георгиевич.

Ытти ял тăрăхĕнче те çак шухăша тивĕçлĕ вырăна хуни кирлĕ. Шел, хальлĕхе уйрăм хушма хуçалăхра ĕне усракансене канăçсăрлантаркан ыйту сывлăшра çакăнса тăнăн туйăнать.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Тĕслĕх*

## Вăй-хăвачĕ иксĕлми

***Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен уявне палăртма иртнĕ çул Тăвайри халăх музейĕнче пуçларăмăр. Пуçтарăннисенчен чылайăшĕ шывпа çил арманĕсен, чиркӳ, икĕ хутлă шкул, кил-хуçалăх макечĕсем умĕнче чарăнса тăчĕ. Вĕсен авторĕ Чăваш АССР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята тивĕçнĕ Алексей Семенович Семенов кунтах иккенне пĕлсен кăсăкланакансем ыйту çине ыйту пачĕç.***



● *Алексей Семенов.*

Пурнăç çулĕ яка килмен Лексейĕн. Йышлă çемьере çуралса ӳснĕ, ашшĕ фронтра пуç хунă, çамрăклах плугарьте ĕçлеме пуçланă. Çартан таврăнсан бригадира пулăшаканра, механикра, гараж пуçлăхĕнче, инженерта тăрăшать. Шанса панă тивĕçе чĕре хушнă пек тăрăшса, тĕплĕ пурнăçлать Алексей Семенович. Çакна Хисеп, Тав хучĕсем, тĕрлĕ парне, «Ĕç ветеранĕ» тата ытти медаль çирĕплетеççĕ. Лачкассинчен Тăвайне вăтăр çул ытла çуран е хăй ăсталанă транспортпа çӳренĕ. Автомашинăсене пилĕк пӳрне пек пĕлнĕ, электрооборудование ун пек чухлаканни районта сахал пулнă.

Мĕн пĕчĕкрен çут çанталăка юратса ӳснĕ вăл. Пĕве-çырма тавра мĕн тĕрлĕ йывăç лартман-ши Алексей Семенович? Пархатарлă çак ĕçе хăйĕн ачисене те, ял çыннисене те хутшăнтарнă.

Районта пурăнмалли çуртсене çут çанталăк газĕ кĕртме пуçласан çак ĕçре Лачкассисем малтисен шутĕнче пулчĕç. Кунта ял старости Алексей Семенович тăрăшнипе бригада йĕркеленчĕ, пуçарăва хăй çине илсе ĕçе вĕçне çитерчĕ.

«Тăрăшакан хăй валли ĕç тупать», – теççĕ. Урамсене тирпей-илем кӳртессипе, ялти культура «вучахне» çĕнĕрен чĕртессипе те тăрăшать ветеран. Акă ялти лавкка çумĕнчи клубра халĕ хĕрсех ял уявне хатĕрленеççĕ. Вун-вун хĕрарăм пуçтарăнса ал ĕç тăвать, хушпу-тухья хатĕрлет. Çулла Лачкасси ялĕн кунне анлăн паллă тăвасшăн. Алексей Семенович йĕркеленипех кун пек мероприяти темиçе те ирттернĕ.

Хĕл кунĕсенче те ахаль лармасть ветеран. Ял, хуçалăх историне тĕпчет вăл. Ламран лама пырать ырă çак йăла. Ашшĕ, аслашшĕ-куккăшĕ те кăсăкланнă йăх-несĕлсемпе.

Мĕн кăна ăсталаман пулĕ Алексей Семенович? Çӳлерех асăннă макетсемсĕр вăл чĕр чунсен кӳлеписене хатĕрленĕ, аэроçуна тунă. Юлашки çулсенче касса эрешленĕ çирĕме яхăн турăш кĕтесĕ ăсталанă.

Хурт-хăмăрпа та аппаланать. Пуш уйăхĕнче юхтарнă пыл çитерсе тĕлĕнтернĕччĕ пĕр çулхине. Унпа тем çинчен те калаçма кăсăклă. Ырă кăмăллă, çынна чунтан, ялан пулăшма хатĕр вăл.

Алексей Семеновича ялта хисеплеççĕ. Пархатарлă ĕçĕсем пуриншĕн те тĕслĕх вырăнĕнче. Ял старости çак кунсенче сумлă юбилей – çуралнăранпа 85 çул çитнине паллă турĕ. Çирĕп сывлăх, ыррине сунатăп хам чунтан хисеплекен çыннăма.

■ **Валерий ЧАЙКИН.**
Тăвай районĕ

## Хушма суйлавра палăртĕç

***Чăваш Республикинчи территори суйлав комиссийĕсенчен пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче республикăри 11 районта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе депутачĕсене тата район депутачĕсене палăртма хушма суйлав ирттереççĕ.***

Унта Элĕксем Шĕмшеш ял тăрăхĕн пуçлăхне тата Ехремкасси ял тăрăхĕн депутатне суйлĕç. Çавăн пекех Атнаш /Канаш районĕ/, Шурут /Комсомольски/, Шуршăл /Сĕнтĕрвăрри/, Кавал /Вăрмар районĕ/ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене тата Аслă Чемен /Патăрьел районĕ/, Лапсар тата Сарапакасси /Шупашкар районĕ/, Иваньково /Етĕрне районĕ/, Лаш Таяпа /Елчĕк районĕ/, Тăванкасси, Вырăс Улхаш /Çĕмĕрле районĕ/ ял тăрăхĕсен депутачĕсене палăртĕç. Унсăр пуçне суйлав хыççăн Елчĕк тата Пăрачкав районĕсен депутачĕсен Пухăвĕсем тулли йышпа ĕçлеме пуçлĕç.

Кандидатурăсене политика партийĕсемпе общество пĕрлешĕвĕсем тата çынсем хăйсене хăйсем сĕнме пултараççĕ. Документсене 2014 çулхи пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче, 18 сехетчен йышăнаççĕ.

■ **А.СТЕПНОВ**

*Сĕнӳ*

## Пачăшкăсем – депутатсем?..

Пирĕн республикăри тĕрлĕ шайри депутатсен хушшинче тĕн культне парăннă çынсем пулманни мана питĕ шухăшлаттарать. Çĕр-шывра экономика реформи кăларса тăратнă йывăрлăхсем хушăнсах пынă, çынлăхпа чыслăх тата кăмăл-сипетлĕхпе этемлĕх туйăмĕсен пĕлтерĕшне хакласси иккĕмĕш вырăна тăрса юлнă чухне чиркӳсенче кĕлĕ вулакансен сăмахĕ ĕнентерӳллĕ пек туйăнать. Анчах та хальлĕхе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен «парламенчĕсенче» çак çынсем валли вырăн çук.

Манăн шухăшăмпа – хальхи самана пачăшкăсене те халăхран мандат илме явăçтармалла. Вĕсем суйлавçăсен шанăçне чиркӳре кĕлĕ-литурги ирттернипе кăна мар, хăйсен округĕнче пурăнакансен ыйтусĕнĕвне те ĕçпе тӳрре кăларса пырасса шанас килет. Хăш-пĕр регионти Думăсемпе саккунсем кăларакан Пухусенче тĕн çыннин тумĕсене тăхăннă пачăшкăсем депутатсемпе пĕрлех сасăлама хутшăннине куратăп та – хама чылайранпа канăç паман шухăша хаçат вулакансем умне кăларма хăюлăх çитернине тĕрĕс утăм вырăннех хуратăп. Урăхла, турă вĕрентĕвне тĕне ĕненекенсен хушшинчи саракан çын хăйне çакăн пек явапллă ĕç шанса панă хыççăн таса тивĕçе пурнăçа кĕртме нихçанхинчен тăрăшуллăраххăн тытăнĕ.

Халĕ ял куç умĕнчех пĕтсе пырать-çке. Ăçта ан кай – унта «симĕс çĕлен» «сăннине» çĕкленĕ, масарсенче вара ретренех – пурăнас çамрăксен вил тăприйĕ... Тăван тăвана хисеплеми пулчĕ, кӳршĕ патне каçса ларма пăрахрĕ, килĕшӳпе çураçу çулĕ çине каска хыççăн каска тухса выртать...

■ **Иван ИГНАТЬЕВ, ĕç ветеранĕ.**
Канаш районĕ,
Çĕнĕ Шуртан ялĕ

*Кану*

## Хоккей ăмăртăвĕ кăна мар

***Нарăсăн 8-мĕшĕнче Советскинчи каток хоккей вăййине кăмăллакансен шавĕпе тулнă. Ăмăртăва районти 4 ял тăрăхĕнчен командăсем хутшăннă. Хоккеистсене Етĕрне район администрацийĕн пуçлăхĕ В.Кузьмин, унăн пĕрремĕш çумĕ В.Семенов, район депутачĕ Л.Спасова саламланă, ăнăçу суннă, çакнашкал ăмăртăва кашни çулах ирттерме палăртнине пĕлтернĕ.***

Лариса Спасова хоккей вăййине пирĕн пурнăçа илем кӳрекен чи илемлĕ вăйăсенчен пĕри тесе шухăшлать. Ахальтен мар вăл Советски командине хоккей формин комплектне парнеленĕ. Лариса Семеновна, ку тăрăхран суйланнă депутат пулнă май, Советскисене тĕрлĕ ăмăрту-мероприяти ирттерме пулăшсах тăрать.

Хоккей ăмăртăвĕнче Мăн Явăш команди пĕрремĕш, Советскисем – иккĕмĕш, Пĕрçырлансем 3-мĕш вырăн йышăннă.



Çитес вăхăтра Советскисем хăйсен катокĕ çинче Элĕк районĕнчи Тавăт командипе тĕл пулаççĕ.

Йĕлтĕр спортне кăмăллакансем кашни çулах Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен Н.Маловпа В.Павловăн парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртусене каллех Советскине пухăнаççĕ. Ăмăрту нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче иртет. Советскинче шкул уçăлнăранпа 180 çул çитнĕ. Çакна тата паллă ентеше В.К.Магницкий этнограф çуралнăранпа 175 çул çитнине халалласа Советски шкулĕнче пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче пысăк уяв ирттерме палăртнă.

■ **Лилия ПЕТРОВА.**
Етĕрне районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

**Кăларăма Юрий СТЕПАНОВ хатĕрленĕ.**

